**Нина Левая**



# Салам курки

Сăвăсем

Нина Левая

# Салам курки

Сăвăсем

Çирĕклĕ Шăхаль
2020

Левая Н.
Салам курки: сăвăсем. – Çирĕклĕ Шăхаль: МВУ «Çирĕклĕ Шăхалĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул», 2020. - 43 стр.

Кĕнекене паллă кунпа саламламалли сăвăсем кĕнĕ.

Левая Н.А.2020

Алла лекмерĕ юбилей черкки……………………….33
Çуралнă куна чĕнмен ĕçтеше………………...………..34
Çамрăк мăшăра пиллесе калани ……………………..35
Çамрăк мăшăра саламлани ……………………………36

**Чĕререн хисеплесе (**шкул ачисен ĕçĕсем**)**

Васильев Евгений…….………………………………..39
Воронова Мария…………………………………………39
Галкин Иосиф…………………………………………..40
Захарова Татьяна……………………………………..40
Лапшина Анжела………………………………………41

## ТУПМАЛЛИ

### Саламласа сунатăп сывлăх...


2001 ç. шкул пĕтернĕ ачасем умĕнче сăмах калани....................................................................5
Сильвестр Ивановича…………………………….............9
Кăçал сан паллă çул…………………………………….10
Çуралнă кун ячĕпе ыр сунса……………………………..11
Юлашки шăнкăрав янăрать…………………...….........12
Пĕр шкулта вĕрентĕмĕр…………………………………..13
Çын хушшинче эс пĕрмаях……………………………15
Анне пурри – телей!.....................................................16
Çуралнă кун ячĕпе!......................................................17
Вĕлле хурчĕ евĕрле шав ĕçре эс………………………..18
80 çул тултарнă ятпа!...................................................19
Эс – ăш пиллĕ хĕрарăм…………………………………..21
Микулай Măскала…………………………………….......22
Эс – телейлĕ хĕрарăм……………………………………..23
Аппа аслăрах пиртен ……………………………...….24
Маруç аппана...............................................................25
Надя тусăма………………………………………………25
Пĕр – пĕрне пĕлетпĕр тахçанах……………………...….26


### Тус-тăван саламĕ


Упрар тăван чăвашлăха!...............................................29
Эс пирĕншĕн хаклă…………………………………...….30
Чăваш чĕлхи хастарне………………………………......31


# Саламласа сунатăп сывлăх...

## Левая Нина Аркадьевнăна

Çеçпĕл Мишшине пĕлетпĕр,
Талантĕнчен тĕлĕнетпĕр.
Ухсай Яккăвĕ аван,
Ивановпала тăван.
М.Кипекĕн «Кайăк тусĕ»
Вуламасăр кам – ха тӳсĕ?
Академик Волкова
Пур тĕнче пĕлет ара.
Петр Петрович Хусанкай
Çырнă сăвăсем нумай.
Стихван Шавли сăввисенче
Курăнать тавра, тĕнче.
Мархва Трубина çырни –
Чуна, чĕрене тивни.
Иван Яковлев тата
Туртнă чăваша çутта.
Тăван сăмах вĕрентекен –
Чĕрере хĕм чĕртекен.

*Лапшина Анжела, 2015 çул*

***

Мухтав сире, учительсем,
Пире нумай вĕрентнисем,
Пĕрмай ăс паратăр пире,
Эсир калани – ялан чĕрере.
Юрататпăр тăван чĕлхене,
Ăна манас çук эпир ĕмĕрне.

*Галкин Иосиф, 2015 çул*

***

Нина Аркадьевна
Тăван чĕлхе вĕрентет,
Урокра ответлесен
Мухтаса илет.

*Захарова Татьяна, 2015 çул*



## 2001 ç. шкул пĕтернĕ ачасем умĕнче сăмах калани

Вĕçрĕç çулĕсем,
Шкулта вĕреннĕ вăхăтсем…
Пур – ши вĕсенчен хакли,
Пур – ши вĕсенчен пахи?
Вĕренсе тухатăр, ачасем,
Халĕ ĕнтĕ – йĕкĕтсем, хĕрсем…
Çулсем чĕнеççĕ малалла сире,
Хурлăхлăн ал сулатăр пире.
Хыçа юлаççĕ уроксем,
Малта вара – экзаменсем…
Кашнине юлашкинчен
Ыр сăмах калас килет,
Хăш – пĕр самантсем çинче
Чарăнса тăрас килет.
Ак Васильева Светлана
Хăть ташлама, юрлама,
Тĕрлĕ камит кăтартма
Вăл питех ăста.
Вĕренчĕ пит тăрăшса,
«Каяп, - тет – экономиста».
Семеновсен Алеши,
Ах, тур, кама хывнă – ши?
Укерме те пултарать,
Гитарăпа та калать.
Константинова Надя -
Питĕ маттур хĕрача,

Вĕренӳре тăрăшать,
Конкурссенче тупăшать.
Тĕрлĕ олимпиадăра
Миçе хут пулман ара!
Дневникне уçса пăхсан
Пĕтĕм «пиллĕксем» кăна.
Архипов Валерие
Ялта кашниех пĕлет,
Пĕр харăсах икĕ шкул
Пĕтерет вĕт ачи, мур!
Купăспа та вăл вылять,
Гитарăпа та калать.
Концертсенче юрласа
Вăл питех савăнтарать.
Земсковсен Саши тата
Хĕвел тейĕн, тупата!
Ун пекех ялан кулать,
Ăна курсан - кăмăл тулать.
Нихçан сӳрĕк çӳремест,
Тен, вăл хурланма пĕлмест?
Кармалсене
Уроксене
Пĕр «сиктерми» çӳренĕшĕн
Тав тăватăп пур чунтан!
(Пире ас илĕç - и çын пулсан?)
Ачисене хурлас килмест,
Кăмăлĕсем – сар çу пекех.
Пĕринчен тепри маттур.
Кĕрешеççĕ, ай тур – тур!



## Пурнăç пуçламăшĕ – шкул çулĕсем…

Пурнăç пуçламăшĕ – шкул çулĕсем,
Асран нихçан тухас çуккă вĕсем.
Пурте пĕрремĕш: пĕрремĕш звонок,
Эпир тăнланă пĕрремĕш урок…
Пĕлӳлĕх тĕнчи пире тыткăнлать,
Ырă учитель анне пек пулать.
Учитель пире ырра вĕрентет,
Пиртен çын пулсассăн эх, хĕпĕртет.

*Васильев Евгений, 2010 çул*

***

Сан умăнта эп пуçăма таятăп,
Учитель пуласси вăл – чыслă ят,
Пурне те ăс панишĕн тав тăватăп,
Вĕрентекен ачаран çын тăвать.
Учителе эсир нихçан ан манăр,
Саламлăр уявсем çитсе килсен,
Учитель ячĕ вăл хисеплĕ пултăр,
Этемлĕх çĕр çинчен çухаличчен.

*Воронова Мария, 2015 çул*

Лапшин Александăрĕ,
(Хам пĕлместĕп те ара)
Спорт мастерĕ тет иккен.
Чапа тухнă тет вара
Темле «вольнăй борьбара».
Карсакова Аэлита та
Питĕ маттур теп тата.
Шутсăр вăйлă ўкерет,
Çынна шалт тĕлĕнтерет.
Вообщем, питĕ пултарать,
Кин тума ăна юрать.
Обществăлла ĕçсенче
Венера питех хастар,
Шура та унран юлмасть,
Кая юлма юратмасть.
«Тăваттă» - «пиллĕкпе» кăна
Вĕренеççĕ тупăшса.
Кайран камсем пулĕç – ши,
Курсан – сывлăх сунĕç – ши?
Наумова Алинана
Мухтас килет чунтан ман.
Сăвăсем аван çырать,
Унтан поэтах пулать.
Чăвашла уроксенче
Андреев ман «йĕп çинче».
Пĕрмай алă «тăратать»,
Ответлесшĕн тăрăшать.
Пĕр – пĕр ученăй пулсан
Паллăпăр – и ăна кайран?

Кама асăнмарăм – ши?
Ах, Муравьев Игоре.
(Кайран хама пĕтерет!)
Ачи лайăх вĕренет,
Пур ачашăн та пример,
Пирус туртмасть, например.
Усал сăмах калаçмасть,
Сывлăх сунма та манмасть.
Сăмаха вĕçлес майпен,
Пур каларăш чăвашсен:
«Ытлашшине каçарăр
Çитменнине çитерĕр».
Ятланă та пуль сире,
Япăх тăвас тесе мар.
Мухтанă та пуль сире,
Тен, пачах сăлтавсăр мар?
Усаллине йăлт манăр,
Ыррине асрах тытăр.
Шкулăн ятне ан ярăр,
Ыр ята ан варалăр.
Сунам сире ăнăçу,
Пурнăç пытăр пыл та çу.
Пыл та çăвах пулмасан
Пуça усма кирлĕ мар,
Шанчăк çумра пулмасан
Пурăнма та кирлĕ мар.
Телейлĕ çул апла сире!
Манар мар: эпир – сире,
Эсир – пире…

25.05.2001



# Чĕререн хисеплесе…

Шкул ачисен ĕçĕсем

## Çамрăк мăшăра саламлани

Эпир пухăннă кунта
Çĕн мăшăра саламлама,
Ольăпала Славăна
Телейлĕ юрату сунма.
Юратупа пĕрле тата
Сунатпăр çирĕп сывлăх,
Сирĕн ĕмĕр – ĕмĕрех
Пултăр ялан ырлăх.
Сире тата мĕн сунас?
Ик куç тулли ачасем,
Пурте сире хывнисем…
Килĕшет – и çак сăмах?
Амăш валли – хĕр ача,
Ашшĕ валли – ывăлĕ,
Паллах, пĕрле выляма
Пулччăр йĕкĕр ачасем.
Акă сирĕн аллăрта
Çавра ылтăн çĕрĕ пур.
Çакă ылтăн çĕрĕ пек
Ялкăштăрах юрату,
Çакă ылтăн çĕрĕ пек
Ан вĕçлентĕр юрату!

*Авторĕ паллă мар*



## 60 çул тултарнă ятпа!

***Çирĕклĕ Шăхаль ялĕнчи***
***Шелтуков  Сильвестр Ивановича***

60 çул тултарнă ятпала
Саламлатпăр пур чунтан.
60 çул вăл нумай мар,
Пит сахал та теер мар.
Анчах тепри утмăлта
Шутламасть те ватăлма,
Вун саккăрти хĕрсене
«Хыпашлаççĕ» куçсемпе.
Чун вăл ватăлма пĕлмест,
Вăйĕ унăн  иксĕлмест.
Мăшăрăр çумра чухне
Ан пăхкалăр айккине!
Ăслă çынсем хăнана
Çÿремеççĕ пуш алпа,
Йышăнсамăр парнене
«Персид патши» кавирне.
Салмалатпăр пур йышпа,
Ырлăхпа телей сунса.
Сирĕн свлăхшăн паян
Çĕклер тулли черккесем.
Уçăр -  ха шампанскине,
Ĕçсе парар эрехне.

# Кăçал сан паллă çул…

*Хампа пĕр тăван пиччене, Борис Аркадьевич Кувшина*

Кăçал сан паллă çул,
Кăçал сан – юбилей,
Сунатпăр ăнăçу,
Савăнăçпа телей.
Сана ырă сунса
Калас сăмах чылай,
Пыратăн «ӳт хушса»
Çултан – çул эс самай.
Юлташусем нумай,
Паллах, ку пит аван,
Çапах нихçан ан ман:
Хакли пĕрех – тăван.
Ас тивнĕ пурнăçра
Тертне, хура – шурне,
Анчах мăшăр çумрах,
Тавах – хĕрӳсене.
Арçын – çемье тĕрекĕ,
Апла, тĕреклĕ пул!
Эп черккене çĕклетĕп,
Борис, телейлĕ пул!

07.07.2011



# Çамрăк мăшăра пиллесе калани

Аннĕрсен кăкăрне çисе, аçăрсен чĕрçи çинче сиксе ,пĕчĕк ар çын ачаран Иван паттăр пек вăйлă каччă, пĕчĕк хĕр пĕрчинчен чечек пек хитре хĕр пулса ӳсрĕр.

Пĕр – пĕрне тĕл пулса, юратса пĕр тĕвве тĕвĕленме шутларăр. Апла пулсан, сирĕн хушăра никам уйăрайми çирĕп юрату пултăр.

Пурнăç çулĕ – тумхахлă та кукăр – макăр. Çав çула çирĕппĕн утса тухмалла пултăр. Ваттисене хисеплĕр. Хăна килсен сĕтел çинче яланах çăкăр – тăвар пултăр. Çитес çул аллăрта пĕчĕк пепке пултăр.

Ĕçчен пулăр. Ĕçе юратса ĕçлĕр.

Ĕçлеме ан ӳркенĕр. Ĕçлесе тупнă укçапа пĕлсе усă курăр. Ытлашшине чăлха кунчине пуçтарăр, ватăлсан канлĕ ларса çӳреме машина илмелĕх пултăр.

Хăвăр та тăрăшăр, Турă та пулăшса пытăр сире! Телей кайăкне нихăçан та алăран ан вĕçертĕр. Телейлĕ пулăр!

*Мария Чернова (Маруç аппа)*

## Çуралнă куна чĕнмен ĕçтеше

Юбилей эрехне
ĕçесси ман пулмарĕ,
юбилей уявне
чĕнмен пулнăран.
Пукан çинче
юбиляра йăтасси пулмарĕ,
ĕçтеш çуралнă куна
йыхравлама маннăран.
- Тултар шур эрех! –ыйтать
уралла черкке.
- Халех тултаратăп! – тет чипекркке.
Савăк юрă юрлать чĕре,
Ларатпăр ирĕклĕн кĕрекере.
Эпир паян чăн хисепре.
Туслăха упрар,
вăл пытăр ĕмĕр – ĕмĕре!
Ятлаçмастпăр паян,
вăрçмастпăр туса текех,
Сăмаха вĕçлеме
пар эсĕ шурă эрех.
Нина тус! Пултăр вăрăм
кун – çул,
Пултăр сывлăх, пурăн 100 çул!

*ЧНК вĕренӳ комитечĕн ертӳçи, ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ*

*Г. Никифоров*



## Çуралнă кун ячĕпе ыр сунса

***Кивĕ Эйпеç шкулĕн вĕрентекенне,***
***Раиса Анатольевна Федоровăна***

Çын хушшинче çын мĕнли
Кăшт пăхсанах палăрать.
Чунупа эс илемли
Калаçнинчен курăнать,
Çавăратăн кăмăлпа,
Ăс-халпа тĕлĕнтерен,
Ырă, ăшă куллупа
Сив пăра ирĕлтерен.
Пĕр усаллăх çук санра,
Куçу ăшă сапалать,
Ырă кăмăллăх – юнра,
Чуну витĕр курăнать.
Турă кӳтĕр пархатар,
Ан пĕлсем чир-чĕр мĕнне,
Мăшăр пултăр юнашар,
Телей пултăр çемйӳне.

05.10.2013

# Юлашки шăнкăрав янăрать…

***2014 çулта шкул пĕтернĕ çамрăксене***

Юлашки шăнкăрав янăрать,
Саманчĕ ытла хумханаллă,
Куçсенче çут куççуль ялтăрать,
Уйрăлу вăл питех пăлханаллă.

Ытарми пикесем, каччăсем,
Эсир пирĕн чĕре витĕр тухнă,
Пĕчĕк чух пулнăран айвансем
Ятласан кӳренни те, тен, пулнă?

Вĕренмесĕр те килнĕ пайтах
Пĕринчен тепри шухă лараттăр,
Çак самант тăрса юлтăр асрах,
Пĕрле чух эсир питĕ савнаттăр.

Пĕр-пĕрне пулăшни, итлени
Пурнăçра яланах çĕклентертĕр,
Ан çухалтăр эпир вĕрентни,
Чунсенчи çынлăха ан пĕтерĕр.

23.05.2014



# Алла лекмерĕ юбилей черкки…

Алла лекмерĕ юбилей черкки,
Ăнланаймарăм эп: мĕн пирки?
Çаврăнăçуллă пулаймарăм – ши,
Саламлама май тупаймарăм – ши?

Халь пĕтĕм шухăш юбилей çинче,
Мĕнле кĕрленĕ вăл Шăхалĕнче?
Çĕр тĕпретсе ташларĕç пуль çынсем,
Выльярĕç пуль асамлă купăссем.

Эп çеç Туçа енчи чăваш ачи,
Юбилейра ташлас пуса каччи,
Шупашкарта йыхравсăр юлнăран
Паян кунччен те хуйхăрап чунтан.

Шутлатăп: кăнтăрла хуравĕ çук,
Шутлатăп каçхине – хуравĕ çук.
Шутлатăп пĕрмаях мĕскер пирки
Алла лекмерĕ юбилей черкки.

*Микулай Мăскал*

Йĕркелеççĕ тĕрлĕ конкурссем
Ачасем е ĕçтешсем валли,
Ирттереççĕ шав фестивальсем –
Пушă вăхăт çук никам валли.
Вĕрентеççĕ шкул ачисене
Сăвăçсем, тĕпчевçĕсем пулма,
Районпа республика шайне
Çитнĕ май çĕнтерӳсем тума.
Ахаль мар шкул ачисем хастар,
Ахальтен савмаççĕ чĕлхене,
Вĕрентекенсем вĕсен хастар,
Çавсенчен илеççĕ тĕслĕхне.
Районти чĕлхе хастарĕсем –
Юптаруçăсем те сăвăçсем.
Вĕсемех – ăста тĕпчевçĕсем,
Ыр йăла –йĕрке управçисем.
Юрăçсем те куçаруçăсем,
Тĕрĕ – эрешсен ăстаçисем.
Вĕсем – ăслăлăх ĕçченĕсем,
Пултаруллă сцена ăстисем.
Çавăнпах – çке çамрăк ачасем
Шав çыраççĕ ăслă хайлавсем,
«Елчĕк ен» е «Тантăш» хаçатсем
Халь вĕсен чи çывăх тусĕсем.
Пурăнать – ха, пурăнĕ чĕлхе
Çавăн пек хастар çынсем пур чух,
Янăрать – ха, янăрĕ чĕлхе
Çамрăксем чĕлхешĕн çуннă чух.

*Галина Енейкина*



# Пĕр шкулта вĕрентĕмĕр

***Хăвăлçырма шкулĕнче пĕр класра вĕреннĕ тус – тантăшсене асра тытса***

Пĕр шкулта вĕрентĕмĕр
Хăвăлçырмара,
Пĕр - пĕрне пĕлейрĕмĕр
Миçе çул ара.
Ик ялтан çӳреттĕмĕр
Ăс пухма шкула,
Пит ĕмĕтленеттĕмĕр
Ӳссе çын пулма.
Вĕçсе иртрĕç ак çулсем,
Çук халь тавăрма,
Кĕмĕлленчĕç халь çӳçсем.
Ĕнтĕ – аллăра.
Шкул пире вĕрентрĕ
Туслăн пурăнма,
Инкек – мĕн пулсан
Ал тăсса пама.
Питĕ савăнатпăр
Туспа тĕл пулсан,
Чунтан калаçатпăр
Пĕр – пĕрне курсан.
Камăн мĕн çĕнни пур,
Ывăл – хĕр мĕнле,
Мĕнле çитĕнӳ пур,
Пурнăç еплелле?

Кам хваттер туяннă,
Теприн пур мăнук,
Хăнана пымашкăн
Ах, тур, вăхăт çук.
Пур халь «Одноклассник»
Интернет сайтра,
Çавăнта ларатпăр
Пушă вăхăтра.
Саламсем çыратпăр
Çуралнă кунпа,
Пĕрле савăнатпăр
Пĕр – пĕр пулăмпа.
Аякка юлаççĕ
Шкул вăхăчĕсем,
Пĕртте манăçмаççĕ
Асрах ак вĕсем.
Хут е тимĕр- тăмăр
Пухнă тăрăшса,
Савăнăçлă хамăр
Ĕç пырать ăнса.
Саккăр б классем
Хуть хăçан малта,
Маттур ачасем
Пур-ха çав ялта.

Ильина Валяччĕ
Пирĕн командир,
Хуть ăна ятлаччăр
Вăл кулать каç - ир.
Сасси мĕне тăратчĕ
Уяв – концертсенче,
Клубра зал кĕрлетчĕ:
Валя – сцена çинче.
«Хăравçă мулкача»
Вăл калама тăрсан,
Вилетчĕ ачапча
Кулса ăш хытнăран.
Кантăка та ватнăччĕ
Пĕрре эпир йышпа,
Туххăмра шăпланнăччĕ
Туйса пуль айăпа.
Нумай ыр самантсем
Тухаççĕ куç умне,
Асрах учительсем,
Манмастпăр ĕмĕрне.
Истори урокне
Ас тунă яланах,
Сазонов Олимпине
Вĕрентнĕшĕн тавах!
Чи юратни паллах
Чĕлхе урокĕсем,

Галина Демьяновнăпа
Вĕреннĕ сăвăсем.
Чĕре патне пыратчĕç
Илемлĕ хайлавсем,
Вулавăшра юлманччĕ
Илмен кĕнекесем.
Савинов Славикĕнччĕ
Кĕнеки ялан алра,
Ачи чăнах аванччĕ,
Шел, вилчĕ çамрăклах.
Эх, физкультурăна
Кĕтеттĕмĕр ялан,
Зоя Андреевнăна
Вĕрентнине манман.
Футбол вылянă чух
Хĕрсем «воротăра»,
Хĕрсен ушкăнĕнче -
Ялан Ловкин Гера.
Ырра кăна вĕрентнĕ
Пире учительсем,
Эпир, тен, кӳрентернĕ
Ун чух айван ăссем.
Шкулта вĕреннине
Асран кăларас çук,
Эп хамăр классене
Манса каяссăм çук.

04.10.2014



Сурпан евĕрех вăрăм пултăр кун-çул,
Нумай пулччăр тус-йышусем.
Ялан такăр пултăр умри утас çул.
Эс пирĕншĕн хаклă, пĕлсем.

*Районти чăваш чĕлхипе литературине*
*вĕрентекенсен ячĕпе Г.Енейкина*

## Чăваш чĕлхи хастарне

Тăван шкул, унта вĕрентекен
Ачасемшĕн хаклă чунтанах,
Пĕлӳпе çӳле шав çĕклекен
Юлĕ ассенче яланлăхах.
Ман сăмах чăвашлăхшăн çунса
Ĕмĕрне ирттерекен çинчен,
Чăн чăваш чĕлхишĕн тăрăшса
Хĕмленсе вĕрентекен çинчен.
Савнăран ман Елчĕк тăрăхне
Вăй хураççĕ çакăнта вĕсем,
Районти кашни шкул ачинче
Çунтăр теççĕ вĕçĕм çав хĕлхем.
Вĕрентӳ ĕçне пĕлсе туни
Ачасен пĕлӳ шайне çĕклет,
Юратса чăвашлăхшăн çунни
Çитĕнӳ çуллен – çул парнелет.
Тăрăшса ĕçленĕрен вĕсем
Илчĕç Президент Гранчĕсене,
Çӳллĕ шайри конференцисем
Чыс кӳреççĕ чĕлхеçĕсене.

## Эс пирĕншĕн хаклă

*Пирĕн ассоциаци ертӳҫине,*
*Ытарайми Нина Аркадьевнăна*

Паян сан ҫуралнă куну, ҫавăнпа
Сăнсем пирĕн ҫутă, хавас.
Чунтан-чĕререн те тулли кăмăлпа
Пурин ячĕпе ыр сăмах-ҫке калас.
Эс – пирĕн ыр тантăш, канаш паракан,
Санра иксĕлмест пултару.
Чунри хĕлхемпе ырă ҫеҫ сунакан
Хастарлăху ан чактăрах.
Ăш пиллĕхӳпе ху патна илĕртен
Пире кашнине чăннипе.
Хитре куллупа эс хуйха та сирен
Чунтан ҫĕн хавха сĕннипе.
Иртсен те ҫулсем эс ан туй ватлăха,
Ан чактăр хаваслăх, илем,
Туйса пурнăҫри чи таса хăтлăха
Эс пурăн тесе халь сĕнер.
Тапса тăтăр сан сывлăху яланах,
Пиллетĕр шăпу телей ҫеҫ.
Эпир ыр сунатпăр сана чунтанах,
Чунтан савăнса йышăн ҫеҫ.
Ҫуратнă тĕпренчĕкӳсем- ачусем
Сана савăнтарччăр куллен,
Сана ыр сунан ĕҫтешсем, тусусем
Санпа мухтанайччăр ҫуллен.



## Ҫын хушшинче эс пĕрмаях

*ИФ 22-82 ушкăнра пĕрле вĕреннĕ тус-тантăша*
*Галина Фирсовна Хлебниковăна*

Аслă шкула пĕтертĕмĕр
Пĕрле Шупашкарта,
Вĕренĕве вĕҫлерĕмĕр -
Тĕплентĕмĕр ялта.
Таҫтан та пурччĕ уйрăмра
Хĕрсем те каччăсем,
Кам Елчĕке, кам Вăрнара
Каятчĕҫ студентсем.
Пĕр ĕмĕтпе хавхаланса
Туслашрăмăр йышпа,
Диплом илсен ҫунатланса
Тусаттăмăр тупа:
«Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе,
Манмастпăр ĕмĕрне,
Ачасенче чĕртер хĕлхем,
Ҫĕклер чăваш ятне!»
Ĕҫӳ сан пĕртте ҫăмăл мар,
Шкулта вĕрентекен,
Санра кăна вăл пархатар,
Чуна эс чĕртекен.
Ҫын хушшинче эс пĕрмаях,
Ялан куҫ умĕнче,
Ыр сăнару асрах, асрах
Этем чĕрисенче.

07.10.2014 ҫ.

## Анне пурри – телей

*Хисеплӗ тăхлачăна, Шăмăршă районӗнчи Зоя Филимоновна Кузнецовăна*

Анне пурри мӗнле телей вăл,
Тăван кил ăшшăн туйăнать,
Савса пуçтарăнать хӗр - ывăл,
Анне пурне те хапăллать.

Чи ăшă сăмахсем калаççӗ
Вӗсем чунтан саламласа,
Нумай çул пурăнма сунаççӗ
Сана кашни ыталаса.

Чăтăмлăхна санне мухтаççӗ,
Ыр кăмăлу çунат хушать,
Эс пурăннишӗн савăнаççӗ,
Анне пурри хăват парать.

Эс анлă çул çине кăларнă,
Ик куç тулли ачусене,
Ӳстернӗ чух, паллах, шутланă:
«Эй, Турă, пулăш вӗсене!

Çӗре çити пуçа таяççӗ,
Çитӗнтернишӗн тав туса,
Сан ятупа вăл, пӗл, туяççӗ
Кун - çул илемлӗ те таса.



## Упрар тăван чăвашлăха!

*Нина Левая вӗрентекене*

Акăлчана туха пуçларӗ
Паян чăваш ачи – пăчи:
Техас çаврипеле юрларӗ
Ӗнер Лащ – Таяпа каччи.
Вашингтонри пек çаптараççӗ
Тимӗрчкасси, Арланкасси,
Пит илтӗнмест кунта халхаççăн
Ухсай та Шелепи сасси.
Тăван сăмах ăçта çухалчӗ,
Мӗн пулчӗ Çирӗклӗ Шăхаль,
Атте – аннен чӗлхин хăвачӗ,
Тен, сирӗле пуçларӗ халь?
Мӗн калӗ Тимӗрçӗ Йăванӗ,
Эктел мӗн калӗ – ши тăрсан,
Тен, хамăр çын тесе ăнланӗ
Пире халь джунглири Тарзан?
Çук, тăвансемӗр, парăнмастпăр,
Сутмастпăр Çеçпӗл чӗлхине,
Чăваш пулсах ярса пусатпăр
Уйăх çине те, Марс çине.
Нина Аркадьевна пур чух – и –
Вăл пӗтӗм Улăп этеме
Чăвашлăх çарӗ евӗр пухӗ
Чӗлхемӗре хӳтӗлеме!

*Юрий Сементер, чăваш халăх поэчӗ*

Сан çутă ăраскал пулнишĕн
Вĕсен те кăмăлĕ тулать,
Мăнуксене пит юратнишĕн
Тăван хĕр - ывăл савăнать.

2015 ç.

## **Çуралнă кун ячĕпе!**

***Çирĕклĕ Шăхалĕнчи Ваттисен çурчĕн заведующине Антонина Васильевна Осиповăна***

Мĕн чуль ĕçре эс вăй хуратăн,
Санра мĕн чухлĕ пархатар,
Пур ĕçшĕн чунупа çунатăн
Ертÿçĕ лавĕ çăмăл мар.
Çын хушшинче яту хисеплĕ,
Илтетпĕр ыр сăмах кăна,
Кун - çул сунам сана хĕвеллĕ,
Ман ырă сунăм – çакăнта.
Ватта - вĕтте эс хисеплетĕн,
Пуриншĕн кăмăл тупăнать,
Хастарлăхна та эп пĕлетĕп,
Санра ырри тапса тăрать.
Телей сан пултăрччĕ умра,
Тĕреклĕ пултăр сывлăх,
Çывăх çынсем пулсан çумра,
Тата мĕн кирлĕ урăх!

07.03.2015

## Вĕлле хурчĕ евĕрле шав ĕçре эс

*Патреккел шкулĕнчи*
*Галина Леонидовна  Енейкинăна*

Ĕçчен хурт сĕрле-сĕрле
Пуçтарать пыл вĕллере,
Вĕлле хурчĕ евĕрле
Шав ĕçре эс, шав ĕçре.

Ĕçÿпе малта ялан,
Тăрăшан чунупалан,
Эс вĕрентнĕ ачасем
Чун пек çывăх халь вĕсем.

Сăвăсем шăрçалама,
Конкурссенче тупăшма
Ăçтан вăй-хал çитерен?
Тупата, тĕлĕнтерен.

Куçсенче хĕлхем çиçет,
Чуну ирĕке вĕçет,
Пултарулăхна кура
Хисеплеççĕ-çке, куран.

Пулăшан ĕçтешсене,
Эс паран ыр сĕнĕвне.
Юрататпăр çавăнпа
Ыр сунса кун-çулунта.



# Тус-тăван саламĕ

## Пĕр – пĕрне пĕлетпĕр тахçанах

*Елчĕк ялĕнче пурăнакан*
*Валерий  Никандровича Теплова*

Пĕр –пĕрне пĕлетпĕр тахçанах,
Каламан пĕрре усал сăмах…
Туслăх пулнă яланах малта,
Мĕскер кирлĕ урăх этеме тата?
Тав сана, хисеплĕ юбиляр,
Малалла та туслă пурăнар,
Пурнăçу сан пытăрччĕ ăнса,
Санран irttĕр хуйхă пăрăнса.
Пурнăç çулĕпе тасан утма,
Тĕрлĕ çитĕнӳ туса пыма,
Çирĕп сывлăхпа вăй-хал сунар,
Çак сăмахсене чунтан калар!

07.12.2019



Кăмăлу пит уçă сан,
Кирек кам чунне уçан.
Çав туртать пит сан патна,
Тавах ырă кăмăлна.

24.06.2015

## 80 çул тултарнă ятпа

*Çирĕклĕ Шăхаль ялĕнче пурăнакан*
*Илья   Иванович Левыя*

Çак паллă кун пулать пĕрре,
Систерет çул иртнине,
Ларатпăр халь кĕрекере -
Саламлатпăр аттене.
Атте вăл халĕ - асатте,
Хисеплĕ ватă, кукаçи,
Саламлатпăр çемьепе,
Тулли паян сĕтел çи.
Атте – сакăр вуннăра,
Çулĕ, паллă, сахал мар,
Анчах паян та вăл «стройра»,
Сăнĕпе те ватă мар.

Çемьере е çын çинче
Ячĕ - сумĕ хисепре,
Сăмах калană чухне
Ăслă шухăшĕ – тĕпре.
Сакăр виннă – саккăр мар,
Пурнăç опычĕ пуян,
Çулсем иртнĕ ахаль мар,
Чĕрÿпе çавна туян.
Куç тулли сан ачусем
Мухтанаççĕ санпалан,
Ытарми мăнукусем
Вĕсене чунпа саван.
Куçусем кăна салху
Çук сан мăшăр çумăнта,
Вăл пулсан хавхалану
Ик хут пысăк пулмалла.
Пĕрле иртнĕ кун-çула
Паянхи пек ас тăватăн,
Ик хĕрпе ик ывăла
Пурнăçра тĕрек параттăр.
Мĕн сунар сана, атте?
Пултăр ăнăçу ялан,
Пур хастарлăх чĕрÿнте
Вăл ан сÿнтĕр нихăçан.

2016 ç.



# Маруç аппана

***Елчĕк ялĕнче пурăнакан***
***Мария Витальевна Черновăна***

Сана чунтан-вартан савса,
Тăванăм вырăнне хурса,
Паллă кунпа саламласа
Çирĕп сывлăх сунатăп.
Юбилей черкки ĕçме,
Тутлине ĕçсе-çиме
Пыраймастăп, майĕ çук,
Уншăн айăплатăн? Çук?

02.09.2019

# Надя тусăма

***Комсомольски районĕнчи Хырай Ĕнелĕнчи***
***Надежда Валерьяновна Кузьминана***

Кам мĕнпе çÿрет - тĕр пуль ăна,
(Ахальтен çÿреç - и хăнана?)
Эпир килтĕмĕр кунта
Надьăна саламлама.
Вĕрентĕмĕр санпала
Эпир пĕрле ЧГУра,
Эсĕ пушкăрт Зинăпа
Куçрăн пирĕн уйрăма.
Çавăнтан эпир туссем,
Питĕ çывăх юлташсем.
Туслăх пытăр ĕмĕре,
Таптăр ырлăхпа чĕре.

24.09.2019

# Аппа аслӑрах пиртен

*Юратнӑ аппана, Шупашкарта пурӑнакан*
*Елена Аркадьевна Павловӑна*

Аппа аслӑрах пиртен,
Пире пӑхнӑ пӗчӗкрен.
Аннесем ӗҫре чухне
Пире куҫран вӗҫертмен.
Хӑех апат пӗҫернӗ,
Пире тутлӑ ҫитернӗ.
Сӑпкара та ҫывратнӑ,
Хытӑ йӗрсен – йӑпатнӑ.
Кашни кунах урама
Илсе тухнӑ выляма.
Вӑл пире кӳрентермен,
Эпир ӑна ҫилленмен.
Кӗҫӗннисем аппаран
Пиллӗк пулнӑ – шутласан!
Ҫакӑн пек аппа пуртан
Савӑнатпӑр пур чунтан.
Саламлатпӑр йышпалан,
Сывлӑх пултӑр ун ялан.

10.07.2018 ç.



# Эс – ӑш пиллӗ хӗрарӑм…

*Аслӑ Таяпа шкулӗнчи*
*Галина Ивановна Маловӑна*

Эс – ӑш пиллӗ хӗрарӑм,
Эс – юратнӑ анне,
Эс тата савнӑ арӑм,
Ытарми асанне.

Сан ҫумра питӗ хӑтлӑ,
Чун ӑшши иксӗлмест,
Туйӑму та хӑватлӑ-
Мӑшӑру куҫ илмест.

Юлташсем хисеплеҫҫӗ,
Ял-йышу та савать,
Тӑвансем те писмеҫҫӗ,
Кӳршӗ - аршӑ шанать.

Начарах та, тен, мар-тӑр
Пурнӑҫра кӗл туни,
Сана Турӑ упратӑр,
Ман парне – ыр сунни.
08.04.2016

## Микулай Мăскала

***Чăваш патшалăх ял хуçалăх***

***академийĕн ветеринари медицинин***

***ĕçченне***

Микулай Мăскал,
Чăн-чăн аксакал,
Темĕн те пĕлет,
 Темĕн те тĕпчет.
Ăслăлăх çынни,
Пур – ха ун çĕнни,
Тĕрлĕ тĕпчевсем,
Кăсăк сăнавсем.
Чунĕпе чăваш,
Пăхма çеç йăваш,
Ĕçĕпе патвар,
Пурнăçра хастар.
Сăмаха туять,
Сăвăсем çырать,
Ун кашни сăвви -
Чун-чĕре кĕвви.

11.07.2017



## Эс – телейлĕ хĕрарăм…

***Хăвăлçырма шкулĕнчи***
***Зинаида Альбертовна Михеевăна***

Эс – телейлĕ хĕрарăм,
Ачусем – куç тулли,
Савăнса пурăнмалăх
Çумăнта - Витали.
Эс – телейлĕ хĕрарăм,
Мăнуксем – ытарми,
Вĕсене йăпанмалăх
Пур улми те çырли…
Эс – телейлĕ хĕрарăм,
Хисеплет ял çынни,
Ĕмĕре асăнмалăх
Тус - йышпа пурăнни.
Эс – телейлĕ хĕрарăм,
Тĕлĕнет пуль кашни,
Ку телей – ăмсанмалăх,
Ку вăл – Турă парни.

11.01.2018 ç.